# Çĕршыв кун-çулĕпе пурăннă



Кашни вăхăтăн хăйĕн юрри теме хăнăхнă эпир. Пирĕн вăхăтăн нумай-нумай юррине çыраканĕ çак кунсенче хăйĕн юбилейне паллă турĕ, 80 çул тултарчĕ вăл. Апла пулин те эпир унран çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсем кĕтме пăрахмастпăр-ха.

Василий Иванович Давыдов-Анатри хăйĕн пĕрремĕш сăввисене çырнă чухне вĕсене кĕвве хывассĕ тесе шухăшламан та пулĕ.

Çамрăклăх туйăмĕпе çунатланнă сăвăç чĕринче çапла йĕркесем çуралассĕ:

**Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ**
**таса ăшă çилĕ,**
**Ылттăн хĕвел тухрĕ**
**янкăр тӳпене.**
**Хитре уçă сасă уй-хир**
**тăрăх кайрĕ,**
**Эпĕ илтрĕм савнă**
**сар хĕр юррине.**

Ф. Лукин композитор çак йĕркесем кĕвве хывăнасса чи малтан туйса илет. Çапла çуралать çамрăксем юратнă пĕр юрă. Ку ĕнтĕ чăваш лирика юррисен классики пулса тăчĕ.

Унтанпа Василий Иванович тĕрлĕ çулхи, тĕрлĕ манерлĕ композиторсемпе пĕрле пайтах юрă çырма ĕлкĕрчĕ.

Тахçанах пулса иртнĕ-ха ку. Ун чухне Улатимĕр Ухли те пурăнатчĕ. Çакскер, Василий Ивановича кăштах йĕплес шутпа-и, пĕр пухура: «Эс юрă çырнă чухлĕ ман арăм икерчĕ те пĕçереймен,» — тесе хучĕ. Кирек мĕнле шӳтре те чăнлăх пуррине манар мар-ха.

Сыннăн ĕçне пĕр сăмахпа пахалама пулсан аванччĕ те, анчах ун пек май çук. Çавăнпах Василий Ивановичăн пултарулăх çулĕн хăш-пĕр кукрисене аса илмех тивет.

Вăл Патăрьел районĕнчи Аслă Арапусĕнче шăп 80 çул каялла çуралнă. Вăл паян та хăйне Октябрь тантăшĕ теме пăрахман. Историе хамăра кирлĕ пек пăсса çырма çук. Хăйĕн вăхăчĕшĕн пурăннă чăваш каччи халăх пурнăçĕпе, çĕршыв пурнăçĕпех пурăннă. Çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕ, хаçатçă, салтак, редактор пулнă, анчах литература ĕçне хăйĕн тĕп ĕçĕ тесе шутланă. Телейлĕ те пайталлă пулчĕ унăн пултарулăх çулĕ. 40 ытла кĕнеке пичетлесе кăларма пултарчĕ. Ача-пăча валли те, мăннисем валли те. Прозăпа та, сăвăласа та. Василий Иванович хăйне поэт юрăç тесе кăна мар, ача-пăча сăвăçи тесе те хăюллăнах калама пултарать.

Паян пурăнакан вăйпитти çынсем пурте унăн сăввисене вуласа ӳснĕ. 50-мĕш çулсенченпе пирĕн пĕчĕк чăвашсем Василий Ивановичăн çырнă «Пĕчĕк туссем», «Пирĕн телей», «Ача-пăча сăввисем», «Илемпи», «Тимушпа унăн тусĕсем», «Атьăр вулар, ачасем», «Сатин кĕпе», «Маттур Санюк» тата ытти кĕнекесене те вулама пултарчĕç.

Василий Ивановичăн юррисăвви халăх юрри-сăввипе пĕр кĕвĕллĕ, çавăнпа вĕсем тӳрех чĕремĕрсем патне çитессĕ те ĕмĕрлĕхе унта юлассĕ.

**Денис ГОРДЕЕВ.**

**Ӳкерчĕкре:** чăваш поэчĕсем В. Давыдов-Анатрипе П. Афанасьев мари писателĕсем патĕнче.

**А. Щербаков сăнӳкерчĕкĕ.**